*И. Н. Ульянов ячĕпе хисепленсе тăракан ЧПУ*
*Ăслăлăх библиотеки*

# Илемлĕ литература

## (2017-2018-мĕш çулсенче пичетленнĕ кĕнекесем)




Андреев, Н. Шăрăх кунсем : калавсем : [аслă çулхи шкул ачисем валли] / Николай Андреев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2017. – 128 с. – Текст : непосредственный.
Жаркие дни : рассказы для детей старшего школьного возраста.

«Шăрăх кунсем» Николай Андреев çамрăк çыравçăн пĕрремĕш кĕнеки. Хайлавсенче вăл XXI ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш ялĕн ÿкерчĕкĕсене калăпланă. Ялти çамрăксен шăпи уйрăмах пăшăрхантарать ăна: ĕç сукки, ĕçкĕпе аташни, çын шучĕпе пуйма ăнтăлни… Çав вăхăтрах тĕп сăнарсен ырă кăмăллăхĕ, юратăвĕ те пысăк вырăн йышанаççĕ калавсенче.



*Андреев
Николай Иванович*




Алексин, В. Н. Тусĕмлĕх чунра-юнра : статьясем, очерксем, интервьюсем / В. Н. Алексин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. – 231 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекере чăваш культурин паллă çыннисемпе тата пултаруллă ертӳçисемпе паллашма пулать. Дмитрий Михлеев кинорежиссер тата çыравçă, Алексей Мажуков композитор, Владимир Бурмистров артист, Михаил Козлов биолог, Борис Чиндыков драматург, Владимир Алексеев юхан шыв флочĕн ертӳçи, Юрий Плющев кинооператор тата ыттисен кăмăл-туйăмне Раççей тата тĕнче пурнăçĕпе шайлашуллăн уçса панă. Вĕсене тăван халăха чунтан юратни, ун ятне-шывне май килнĕ таран ӳстерме тăрăшни, тĕллев патне пысăк тӳсĕмлĕхпе туртăнни пĕрлештерсе тăраççĕ.



***Алексеев***
***Валерий Николаевич***




Волков, А. Н. Малалла-ха пурнăç, малалла... : калавсем, эссе, повесть, роман / А. Н. Волков. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2019. – 303 с. – Текст : непосредственный.

«Малалла-ха пурнăç, малалла…» кĕнекере автор хирургсен йывăр та сăваплă ĕçĕ-хĕлне сăнлать. Тĕп герой – пултаруллă та хăюллă хирург Николай Андреевич. Хăш чухне çывăх юлташ та йĕксĕке çаврăнма пултарать иккен, май тупăнсанах ура хумаваскать. Е пурнăç çăлас тесе тар юхтарнă чирлĕ çын тав тăвас вырăнне кăмăлсăр пулнине палăртать. Çапах та кăвак тӳпене, сар хĕвел курни, çак илеме чирлисене кăтартма пултарни – телейрен те телей.



***Волков***
***Анатолий Никандрович***




Кĕтмен юрату : çамрăк авторсен повеçĕсемпе калавĕсем / О. Австрийская, Н. Андреев, О. Васильева [т. ыт. те] ; [О. Л. Федорова пухса хатĕрленĕ]. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2019. – 143 с. – Текст : непосредственный.



Кĕнекене çамрăк авторсен повеçĕсемпе калавĕсем кĕнĕ. Ольга Австрийскаяна, Николай Андреева, Ольга Васильевăна, Владислав Николаева, Нина Царыгинăна, Дмирий Моисеева чи малтанах хайсем пекех çамрăк сăнарсен кăмăл-туйăмĕ, шухăшлавĕ, хăйсем пурăнакан тапхăра еплерех курни кăсăклантарать. Тĕп темăсенчен пĕри вара – пурнăça кĕтмен çĕртен вирхĕнсе кĕрекен, çын чĕрине тыткăна илекен юрату.














Кервен, В. Г. Аслати чечекĕ : повеҫсем, калавсемпе тĕрленчĕксем / В. Г. Кервен. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. – 255 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекене Василий Кервенĕн повеҫĕсем тата калавĕсемпе тĕрленчĕкĕсем кĕнĕ. Вĕсенче автор тĕрлĕ ыйту хускатать. Акă «Йăмăкĕ» повеҫри Андрей Анастасов чипер сăн-сăпачĕпе, ҫепĕҫ чĕлхипе хĕрсен пуҫне ҫăмăллăнах ҫаврма пултарать. Кайран, чĕринче чăн юрату хыпса илсен, ҫакă ăна пысăк чăрмав кӳрет.

Ҫаран ҫинчи ĕлкken ҫеҫкеллĕ фиалкăна хăш-пĕр ҫĕрте аслати чечекĕ теҫҫĕ. Вăл аҫа-ҫиҫĕмлĕ ҫумăр хыҫҫăн ҫеҫ тухать имĕш… Ку ĕненӳ мĕнпе ҫыхăннине «Аслати чечекĕ» халап ăнлантарса парать.



***Кервен***
***Василий Гаврилович***




Кибеч, А. Юлашки çыру : калавсем / Анатолий Кибеч. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2017. – 159 с. – Текст : непосредственный.

Çын пурнăçĕ пек тĕлĕнтермĕш çĕр çинче урăх нимĕн те çук. Кĕске вăхăтрах тем те сиксе тухма пултарать: ырри те, усалли те, лайăххи те, япăххи те, савăнăçли те, кулăшли те… Асăрхама кăна пĕлмелле, çак кĕнекери пек.



***Кибеч***
***Анатолий Ильич***




Константинов, В. Н. Тупа : роман, повесть, калавсем / В. Н. Константинов. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. – 207 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекене тăвата хайлав кĕнĕ. Вĕсенче кашнинчех тăванпа туслă пурăнмалла, çуралнă кĕтесе манмалла мар текен шухăш мала тухать. «Тупа» романра Йăкăнатпа Калистрат йĕкĕрешсем пĕр-пĕрне нихăçан та пăрахмастпăр тесе тупа тăваççĕ. Çитĕнсе çитсен пурнăç çулĕ вĕсене тĕрлĕ еннелле уйăрса ярать, тĕрлĕ йывăрлăх кăларса тăрататать. Çамрăк чухне каланă тупа сăмахĕсене асра тытĕç-ши вĕсем? Кĕнекере çавăн пекех повеçпе икĕ калав пур.



***Константинов Валентин Николаевич***




Кузьмин, В. П. Тымар : роман / В. П. Кузьмин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. – 447 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекере автор чăваш ялĕн, хресченĕн, интеллигенцийĕн пурнăçĕ çур ĕмĕр ытла хушшинче мĕнле аталанса, çĕкленсе пынине анлăн сăнарланă. Тĕнче вут-çулăмĕнче нумай ĕмĕр хушши аталанса тĕрекленнĕ чăваш хăй çуралнă çĕрĕ çинче ырăлăхшăн, этем телейĕшĕн кĕрешет, инкек-синкекне парăнтарса малаллах талпăнать, йывăрлăха сирсе-çĕнтерсе хăйĕн илем тĕнчине ырă кăмăл-туйăмпа ăслăн, пултаруллăн пуянлатать.



***Кузьмин
Владимир Прокопьевич***




Максимов, Н. Н. Майра патша парни : историллӗ роман / Н. Н. Максимов. – Шупашкар : Чӑваш кӗнеке издательстви, 2018. – 380 с. – Текст : непосредственный.

Историллӗ романри ӗç-пуç Иккӗмӗш Кӗтерне патша вӑхӑтӗнче пулса иртет. Атӑл тӑрӑхне çитсе курма шут тытнӑ майра патша Улатӑрта хӗсметре тӑракан хӑюллӑ чӑваш каччине куç хывать, ӑна хӑйне хураллама службӑна илет. Ахаль салтакран вӑл казак, каярах сержант пулса тӑрать.

Паллах, Кӗтерне çыннисем Сентиере май пулсанах майра патшаран сивӗтме тӑрӑшнӑ, – çавӑнпа та ултӑ çултанах Упа каялла киле таврӑннӑ. Кӗтмен çӗртен тӑван Эпеçе пырса кӗнӗ Сентиере никам та кӗтмен ялта... Çакӑнтан тӗп сӑнарӑн пурнӑçӗ пачах урӑхла çул-йӗрпе чуптарать, шӑпа ӑна Емельян Пугачевпа иккӗмӗш хут тӗл пултарать.



*Максимов*
*Николай Николаевич*




Медведев, А. Ф. Чун хыпса çунсан : калавсемпе повеçсем / А. Ф. Медведев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2018. – 543 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекене «Çамрăклăх», «Улмуççисем çеçкене ларсан», «Аппăшĕ», «Ылтăн уй», «Лайăхран лайăххи» тата ытти калавсемпе «Чи пысăк хисеп», «Урапа та пĕр йĕрпе чупмасть», «Тулли пучах», «Тулă çинчи пухра» повеçсем кĕнĕ. Васкамасăр, тĕплĕн те тÿррĕн çырнă калавĕсемпе повеçĕсенче автор ял çыннин савăнăçне, нуши-тертне, шăпа тĕрĕслевĕсемпе чун-чĕре тăрăмне витĕмлĕ те ăста сăнласа кăтартать.

Кĕнекене авторăн вăрçă хыççăнхи вăтăр-хĕрĕх çул хушшинче çырнă хайлавĕсем пурте тенĕ пекех кĕнĕ. «Эткер» çĕнĕ ярăмпа тухать.



***Медведев Алексей Фомич***




Муравьев, В. Çылăхлă арçын : роман / Валерий Муравьев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2017. – 302 с. – Текст : непосредственный.

Кĕнекери ĕç-пуç Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче тата ун хыççăнхи çулсенче чăваш ялĕнче пулса иртет. Фронтри хаяр çапăçусем лăплансан ялта урăх «вăрçă» пуçланать. Хальхинче – арçынсемшĕн. Хĕветĕр те, ĕнерхи салтак, юрату авăрне лекет. Çылăха кĕнĕскер, тĕрĕс çул çине мĕнле тухĕ-ши?



***Муравьев***
***Валериан Венедиктович***




Сорокин, Н. Аттеçĕм Атăл : [роман-трилоги]. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш кĕнекесем / Николай Сорокин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2017. – 606 с. – Текст : непосредственный.

Сорокин, Н. М. Аттеçĕм Атăл : [роман-трилоги]. Виççĕмĕш кĕнеке / Николай Сорокин. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 2017. – 271 с. – Текст : непосредственный.

Н. Сорокин виçĕ кĕнекерен тăракан «Аттеçĕм Атăл» романа пурнăçра пулни-иртнине тĕпе хурса çырать.

Пĕрремĕш кĕнекере Атăл тăрăхĕнчи чăваш ялĕн тăнăç пурнăçне салатса, ĕçчен хресченĕн килне кăкласа, хуçисене ссылкăна ярса, халăха ирĕксĕр колхоза пухса нушалантарни тухса тăрать.

Иккĕмĕш кĕнекере автор Тăван çĕршывăн аслă вăрçине çĕнĕллĕн кăтартать.

Виççĕмĕш том хальхи самана çинчен. Горбачевăн перестройки, Ельцинăн мирлĕ революцийĕ, Путин реформисем… .



***Николай Михайлович Сорокин***




Трофимов, А. Ҫунтарса кĕллентернĕ пурнăҫ : очерксем : чăваш тата вырăс чĕлхисемпе ҫырнă / Александр Трофимов. – Шупашкар : Ҫĕнĕ Вăхăт, 2017. – 102 с. – Текст : непосредственный.

20–40-мĕш ҫулсенче пĕтĕм ҫĕршывĕпех ҫынсене ним айăпсăр тытса хупасси, персе пăрахасси, «халăх тăшманĕ» ят парасси пуҫланса кайнă. Ҫавна пула ҫĕршер ҫынна тытса хупса лагерьсене ирĕксĕр ĕҫлеттерсе пурăнма ссылкăна янă, чылайăшне персе вĕлернĕ. Айăпланă халăх тăшманĕн ҫемйине те, ватти-вĕттине те шеллемесĕр тыта-тыта Ҫĕпĕре янă… Ҫакăн ҫинчен ҫырса кăтартать А. Трофимов хăйĕн кĕнекинче.




*Трофимов*
*Александр Петрович*

# *Хисеплĕ вулакансем!*

***Выставкăри кĕнекесене***

***илемлĕ литература абонементĕнче***

***(3-мĕш корпус, 501 каб.)***

***илсе вулама пулать.***